**Пăрланнă çил йĕплет пите…**

Пăрланнă çил йĕплет пите.
Хĕве тулать исленнĕ юр.
Çул хыврăн. Ывăнтăн. Çитет.
Канса ил. Акă хӳтлĕх пур.

Тăман лăплантăр та ыран
Эс çитĕн ху çитес çĕре.
Паян эс татăлнă вăйран.
Ура тупанĕ пĕçертет.

Çук, çук... Ан чак, сулмак уттар!
Ачашланма епле хăян?
Мала çеç чĕнекен çутта
Тĕлле, пур ту та çук вăя.

Пурнăçăмра та çил-тăман
Лăсканă пĕрре мар мана.
Пĕлетĕп, чарăнтăн пулсан,
Эс кĕрт айне пулатăнах.

Пĕлетĕп, ăнтăлан çынна
Çул хăй вăй-хал хушса пырать.
Халь утмалла — ут паянах.
Ыран утассине — ыран.

*Гордеев, Д. «Пăрланнă çил йĕплет пите…» : [сăвă] / Д. Гордеев // Тăван Атăл. - 2010. – № 2. – С. 86.*